# АНИСИМ АСЛАМАС

52110

# ЮРĂПА ИРТТЕРĔП ĔМĔРЕ

## УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

*Ф. ЛУКИН,*
*СССР Государство премийĕн лауреачĕ,*
*РСФСР халăх артисчĕ.*

Анисим Асламас кĕвĕленĕ нумай-нумай юрра пирĕн халăх Аслă Отечественнăй вăрçа хыççăнхи çулсенчех хапăл туса йышăннă, вĕсене юратса юрланă. Вăл вăхăтра уйрăмах «Мăшăр кĕмĕл сулă», «Чунрăм тухрăм», «Асттаватăп», «Чĕвĕл чĕкеçсем», «Миршĕн кĕрешекенсен юрри» тата ытти произведенисем музыка коллективĕсемпе халăх пултарулăхĕн кружокĕсенче нумай çул хушши янăрана. Халĕ вара РСФСР, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Орелпа Курск çывăхĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннă, Белоруссие ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ, Хĕвелтухăç Пруссире, Висла, Одер, Эльба таврашĕнче çапăçнă композитор-коммунист çырнă произведенисене çĕршывăмăрта лайăх пĕлеççĕ, вăл гобой валли çырнă поэма паянхи кун ирхи хĕвел çĕршывĕнче — Японире тата ытти çĕрте те янăрать.

А. В. Асламас музыка искусствин мĕнпур жанрĕнче ĕçлет. Фортепианăпа калама çырнă хайĕн сочиненийĕсене те илемлĕ янратать, вăл пултарулла концертмейстер пулнине те эпир лайăх пĕлетпĕр. Асламас çырнă япаласене тĕрлĕ музыкантпа юрăç, чылай коллектив хăйĕн репертуарне кĕртет.

Анисим Асламас Киеври П. И. Чайковский ячĕпе хисепленекен Ленин орденлĕ государство консерваторийĕнче украина совет музыкин никĕсне хывакан паллă ăстаçăсем Б. Н. Лятошинскипе Л. Н. Ревуцкий патĕнче вĕреннĕ, унтан Мускаври икĕ хутчен Ленин орденĕ илнĕ П. И. Чайковский ячĕпе хисепленекен государство консерваторине пĕтернĕ.

Творчество хавхаланăвĕпе тăрăшса ĕçленĕ çак тапхăрта А. В. Асламас операсемпе музыка комедийĕсем сахал мар çырнă: «Священная дубрава», «Прерваный вальс» (П. Н. Осипов либреттисем), «Сеспель», «Вера Сарьялова» (К. Поляковпа Г. Фере либреттисем), «Тăхлачă», «Хĕвеллĕ купсем» (Н. С. Айзман либреттисем), çавăн пекех «Нарспипе Сетнер» опера-балет, чăвашсен пĕрремĕш рапсодийĕ, «Космос симфонийĕ», симфониетта, сюитăсем, поэмăсем, увертюрăсем, «Республика çиййĕн хĕвел хăпарать» кантата, «Поэта асăнса» симфони поэми (сăмахĕсем К. В. Ивановăн), 3 оратори, 5 концерт, 2 квартет, нумай юрă, хорсемпе романссем, тĕрлĕрен инструментпа каламалли произведенисем тата ытти те — пĕтĕмĕшпе пин ытла юрă-кĕвĕ шăрантарса кăларнă. Вăл — чăваш халăх юррисене питĕх те ăстан илемлетекенĕссенчен пĕри.

А. В. Асламас вырăсла кĕвĕсем те сахал мар çырать, вĕсенчен паллăраххисем: «Чапай», «Чебоксарское море», «Новые Чебоксары» (поэма), «Тоскуют мальчишки о небе», «Спокойной ночи, малыши», «За Советскую Родину» тата ытти те. Юлашки вăхăтра икĕ пысăк произведени: тромбонпа каламалли концерт—соло, фортепиано валли «Космическая эра» баллада çырчĕ. Вĕсем пирĕн çĕршывĕпех саралчĕç.

Хальхи вăхăтра композитор А. Емельянов романсĕсем тăрăх хайĕн 7-мĕш оперине — «Сельские вечера» ятлăскерне—çырма тытăнна, çав хушăрах виçĕ хорпа юрламалли «Чемей» ятлă поэма кĕвĕлет.

А. В. Асламас музыка юратакансемпе часчасах тĕл пулать, тăван республикăпа унăн тулашĕнчи чăваш районĕсенчи пултарулăх коллективĕсене аталанма пулăшать, вĕсене хăйĕн çĕнĕ произведенийĕсене яра-яра парать.

Куратпăр ĕнтĕ: чăваш совет музыка искусствине аталантарас ĕçре унăн тӳпи пĕчĕк мар. Анисим Васильевич паян хăйĕн юбилейне патне сулмаклăн пырать.

Асламас кĕвви-çеммине малтанхи нотăсенченех пелме пулать, вĕсен кашниййĕн хăйне евĕрлĕ паллă «сăне» пур. Асламас пĕр теп тĕллеве пăхăнса ĕçлет, ку вăл, кирек мĕнле жанр пулсан та, кĕвĕлекен çĕнĕ произведени ыттисенчен уçăмлăхĕпе, илемĕпе уйăралса тăтăр, итлекен чĕрине чăннипех тыткăнлатăр, унта тарăн йĕрсем хăвартăр, халăха ăнланмалла пултăр тесе тăрăшни. «Музыкăн çĕнĕ шухăшне чи ансат майпа, музыкăн пурне те ăнланмалла, витĕмлĕ, чăннипех чĕрĕлĕх кӳрекен чĕлхипе каласа кăтартасчĕ»,—тет кашни çĕнĕ юрă, опера е симфони çырас умĕн композитор. Палăртнă тĕллеве пурнăçлассишĕн сахал мар тар юхтарать вăл. Тăрăшни сая каймасть. Çакна композитор халăх валли çыракан кашни çĕнĕ кĕвĕ-çемме пирĕн çынсем кăмăлласа йышăнни те тепĕр хут çирĕплетсе парать. Ку вăл композиторшăн чи пысăк чыс.

«Кирек хăш произведение те чуна парса, халăх хуйхи-суйхине, пурнăçне, вăл ыйтнипе лайăх пĕлсе çырас пулать». Композиторăн çак сăмахĕсемпе килĕшмесĕр тăма май çук.

Чăвашсен паллă композиторне ӳлĕмрен те çакнашкалах хастар ĕçлеме, патвар пулма, коммунизм тăвакан паттăр халăхăмăрăн çĕнтерӳллĕ ĕçне-хĕлне савса мухтакан çĕнĕ юрă-кĕвĕ ытларах парнелеме ырлăх-сывлăх сунатпăр.